# САМАХСЕМ

Пур иккен сăмахсем—пуля пек
Шăтараççĕ чĕре хурçине.
Хăшĕсем пур—çĕлен сăннипе
Пĕрĕхеççĕ хăй наркăмăшне.

Пу́р ак „сутăнчăк“—ирсĕр сăмах,
Чун-чĕре çӳçенет вĕресе.
Питĕмрен шарт çупса янăнах
Сăнăма юн çапать хĕретсе.

Пур темле наймака сăмахсем,
Ман çырас та килмест вĕсене.
Çамрăк эпĕ, таса. Ман чĕрем
Вĕсенчен йĕрĕнет илтсенех.

Ака эс сăнчăрта, эс ларан,
Пуçунта шыв сикки пек кĕр-шав...
Кĕç илтетĕн таçтан, аякран:
„Ирĕклĕх!“ тет сана тахăш ав.

Самантрах умăнта—уйĕ-хирĕ,
Сулхăн çилĕ вĕçет ун урлах.
Янăрать юрă пек: „Ирĕк, ирĕк!“ —
Вăй хăватлă, асамлă сăмах.

Çавуна султан эс паттăр пек,
Шăхарать вăл, çиçет. Çил вĕрет,
Çил вылять сан çӳçӳн кăтрипе.
Ак мĕнле сăмах пур тĕнчере!